Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

36 (7779) № * Юн кун, 2010 çулхи çу (май) уйăхĕн 12-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

**Çĕнтерӳ кунĕ**

## Уяв куççульсĕр иртме пултараймасть



Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа 65 çул çитнине уявлама Муркашри тĕп лапамра çын чылай пухăнчĕ. Вĕсем хушшинче вара вăрçă ветеранĕсем чи хисеплисем те чи сумлисем пулнине пĕчĕк ача та сисрĕ пулĕ. Митинг пуçланиччченех урампа пыракан ветерансене тав туса ватти-вĕтти – пурте чечексем парнелерĕç.

Вăрçă çулĕсене аса илтерекен ятарлă сцена çинче вăрçă ветеранĕсем вырнаççан, вĕсем çултан-çул сахалланса пыни тӳрех палăрчĕ. Вĕсене хирĕç парада хатĕрленнĕ çамрăксем вара «эпир сирĕн ята ямастпăр» тенĕн туйăнчĕ.

Чаплă митинга Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н.И. Никитин уçрĕ. Ветерансене çак чи пысăк пĕлтерĕшлĕ уявпа район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов саламласа тав сăмахĕ каларĕ. Чăнах та, Çĕнтерӳ кунĕ пулман пулсан ытти уявсем пулĕччĕç-ши? Вăрçăра пуç хунисен, паян пурăнакан ветерансемпе тыл ĕçченĕсен тӳпи вăл – мирлĕ пурнăç.

Çавăнпа та вĕсен умĕнчи парăм та вĕçĕ-хĕррисĕр. Паллах, ветерансене тав сăмахĕ калакансем нумайăн пулчĕç: Чăваш Республикин çар комиссариачĕн Муркаш тата Элĕк районĕсен пайĕн пуçлăхĕ В.Е. Андреев, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ В.Г. Данилов тата ыттисем те. Ветерансемпе тыл ĕçченĕсем хăйсен аса илĕвĕсемпе митинга пухăннисене вăрçă чăнлăхĕ умне кăларса тăратрĕç тейĕн. Çак уяв нихăçан та куççульсĕр иртес çук пулĕ.

Районти çарпа патриот клубĕсен çамрăкĕсем, шкулта вĕренекенсем, районти шалти ĕçсен пайĕн сотрудникĕсем ветерансем умĕпе мăнаçлăн иртни те куракансен чунĕсене пăлхатмасăр хăвармарĕ. Йăлана кĕнĕ тăрăх В. Шалтыков парнисене çĕнсе илессишĕн иртекен велочупу та парад хыççăн старт илчĕ.

**(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).**

**Сăн ӳкерчĕксенче: район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов саламлать; Çĕнтерӳ паркĕнче – ветерансемпе асăнмалăх сăн ӳкерчĕк.**



**Район администрацийĕнче**

## Тĕрлĕрен ыйтăва тишкерчĕç

Ĕнер район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов район администрацийĕн яваплă ĕçченĕсемпе планерка ирттерчĕ. Чи малтанах Юрий Александрович Аслă Çĕнтерӳ кунне уявланине пĕтĕмлетрĕ. Малалла та аслă ăру çыннисемшĕн кулленех тăрăшмаллине палăртрĕ.

Ку темăна малалла тăсса, район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн ертӳçи В.Г.Никитин çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатмалли черетре майăн 7-мĕшĕ тĕлне 79 вăрçă ветеранĕ тăнине палăртрĕ, вĕсенчен 35-шĕ хваттер е çурт-йĕр туянма право паракан свидетельствăна алла илнĕ.

Владимир Германович çавăн пекех Парк урамĕнчи пулас çĕнĕ çуртăн проектне тума пуçланине, кунти 40 хваттерлĕ çуртра строительство ĕçĕсем малалла пынине палăртрĕ.

Çур аки вара районта пысăк хăвăртлăхпа пырать. Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, ял хуçалăх пайĕн ертӳçи В.А. Калинин каланă тăрăх пĕтĕм лаптăкăн 80 процентĕ çинче çурхи культурăсене акса хăварнă. Ку эрнере районти хуçалăхсем массăллăн çĕр улми лартма тухаççĕ.

Выльăх-чĕрлĕх сферинче те лару-тăру япăх мар. Кунне паян иртнĕ çулхи çак вăхăтринчен 1,5 тонна ытларах сĕт сăваççĕ. Майăн 20-мĕшĕ хыççăн выльăхсене улăха кăлармa хатĕрленеççĕ.

4 уйăх та хыçра ĕнтĕ. Экономика пайĕн ертӳçи Э.И. Симакова районăн çак вăхăтри социаллă пурнăçĕпе экономика аталанăвне тишкерчĕ. Промышленность таварĕсене çак хушăра иртнĕ çулхи çак вăхăтринчен 40,5 процент, ял хуçалăх таварĕсене 14 процент ытларах туса илсе сутнă. Ваккăн сутмалли таварçаврăнăш планне те 11,8 процент ытларах тултарнă, тӳлевлĕ пулăшусене иртнĕ çулхи çак вăхăтринчен 18,7 процент ытларах pană.

Вĕренӳ çулĕ те вĕçленсе пырать. Районти вĕрентӳ, çамрăксен политики, физкультурăпа спорт пайĕн ертӳçи З.Ю. Дипломатова Пĕрлехи патшалăх экзаменĕсене тытмалли йĕрке çинче чарăнчĕ. 11-мĕшсемшĕн пĕрремĕш экзамен майăн 27-мĕшĕнче пулать. Зоя Юрьевна çавăн пекех майăн 13-14-мĕшĕсенче районта «Зарница» тата «Орленок» вăййăсем ирттерессине палăртрĕ. Çавăн пекех вăл ачасен çуллахи канăвĕ çинче чарăнчĕ. Пирĕн район ачисем кăçал «Чайка», «Березка», «Утес» лагерьсенче канĕç. Пурĕ 293 путевка пулмалла. Çавăн пекех каникул вăхăтĕнче шкулсем çумĕнчи сывлăха çирĕплетмелли тата профильлĕ лагерьсем ĕçлĕç.

Планеркăра район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ-культура тата архив ĕçĕсен пайĕн ертӳçи А.Е. Андреева майăн 13-14 мĕшĕсенче республикăра тата районта Чăваш вăрманĕсене аталантарассине пысăк тӳпе хывнă Б.И. Гузовскийăн 150 çулне халалланă мероприятисен программипе паллаштарчĕ. Çавăн пекех вăл майăн 14-мĕшĕнче район администрацийĕн ларусен залĕнче Пĕтĕм тĕнчери çемье кунне халалланă мероприяти ирттесси çинче чарăнчĕ.

Планеркăра çавăн пекех тавралăха тирпей-илем кĕртес, пушар хăрушсăрлăхĕ, районта «Акатуй» уявне иртterес тата район республика кунне хутшăнас ыйтусем тавра калаçрĕç.

**Л. ПАВЛОВА.**

**Саламлатпăр**



Юратнă мăшăрăма, аттене, асаттене, хуньстарике – Çĕньял Оринин ялĕнче пурăнакан **Валериян Серафимович СМИРНОВА** 60 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр, çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, канлĕ ватлăх сунатпăр. Малаллахи пурнăçра мăнуксемпе савăнса, лайăх ĕçпе вĕсене тĕслĕх кăтартса, сывă пурнăç йĕркине тытса пырса пурăнма сĕнетпĕр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, 4 мăнукĕ, Алексеевсен, Субботинсен, Шашкинсен, Никифоровсен çемйисем, çывăх тăванĕсем, хăтипе тăхлачисем.**

### Приглашает общественная приемная

**С апреля 2010 года начала свою работу общественная приемная представителя уполномоченного по правам ребенка в Чувашской Республике по Моргаушскому району Ванеркина Николая Григорьевича.**

**Прием граждан будет проходить каждый первый и третий четверг месяца с 13-00 до 15-00 часов по адресу: с. Моргауши, ул. Мира 9А, общественная приемная Всероссийской политической партии «Единая Россия». 7-14.**

**Çур аки – 2010**

## Çĕнĕ çăкăр никĕсне хываççĕ

Илемлĕ тăракан çурхи çанталăк çĕр ĕçченне самантлăха та кантармасть. «Паянхи тивĕçлĕ те вăхăтра пурнăçланă ĕç кăна малашлăхра йĕркеллĕ канма ирĕк туса парать», – тет паян хĕвелпе тан вăранса хире ака-суха ĕçĕсем пурнăçлама хыпкаланакан хресчен. Вĕсен кашни кунĕ хĕрӳ çур акире иртет. Ĕçсем самантлăха та чарăнмаççĕ. Çакă хресчен çур акине тĕплĕ хатĕрленни тата унăн пĕлтерĕшне тивĕçлĕ хак пани пирки калать. Çу уйăхĕн 11-мĕшĕ тĕлне районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем çуртрисене 7423 гектар çинче (79,9 процент) акнă. Пĕр çул ӳсекен курăксене акнă лаптăксем 903 гектар (55 процент) йышăнаççĕ. Асăннă кун тĕлне хуçалăхсенче 9 гектар (16 процент) пахча çимĕç, 32,1 гектар (52,5 процент) тымар çимĕç акнă. Шăнпа сиенленнĕ кĕрхи культурăсен лаптăкĕсене акнипе пăхсан – пурнăçланă акан пĕтĕмĕшле виçи районĕпе 81 процент.

Çурхи уй-хир ĕçĕсем пĕри теприпе ылмашăнсах пыраççĕ. Çĕр ĕçченĕ çак вăхăта хатĕрленсе ĕçсене хăвăртрах пурнăçласси пирки шутлать. Ахальтен каламан-çке ваттисем: çурхи кун çулталăк тăрантарать. Çу уйăхĕн 11-мĕшĕ тĕлне ака ĕçĕсем пурнăçлассине 10 пĕрлешӳллĕ хуçалăхпа хресчен (фермер) хуçалăхĕ вĕçленĕ.

Паян 6 хуçалăхра çĕр улми лартаççĕ. Ĕнерхи куна ăна 235 гектар çинче лартса хăварнă.

Ĕçсем малалла вăй илсе пыраççĕ.

**Хамăр инф.**

**Паян – Медицина сестрисен кунĕ**

## Çĕнтерӳçĕ – çамрăк специалист




***Марина Николаевна Онькова 2007 çултанпа Муркашри тĕп больницăра ĕçлет. Çамрăк акушеркăна ĕçре тăрăшуллă пулнăран нумай пулмасть районта иртнĕ медицина сестрисен конкурсне хутшăнма сĕннĕ. Поликлиника ятне хӳтĕлеме килĕшнĕ Марина Николаевна. Хастар специалист малтанах çĕнтерессе шутламаннине калать. Ĕç стажĕ те пысăках мар-çке. Шупашкартан конкурса хутшăнакансене хаклама сумлă медицина ĕçченĕсем ятарласа килни вара çамрăк ĕçчене пăлхантарнă, паллах. Анчах та интереслĕ ăмăртусене жюри хакланă тăрăх конкурс çĕнтерӳçи вăл пулса тăнă та.***

***Иккĕмĕш вырăна Йӳçкассинчи пĕтĕмĕшле практика врачĕн офисĕн медсестри Светлана Поликарпова тухнă, виççĕмĕш вырăна – Муркашри тĕп больницăри хирурги уйрăмĕнче тăрăшакан Ирина Коломенскова. Ача çуратмалли уйрăмра тăрăшакан Алевтина Агапова куракансен парнине тивĕçнĕ. Конкурса хутшăннă тепĕр 5 медицина сестри тĕ тĕрлĕ номинацисенче парнесемлĕ пулнă.***

**Н. НИКОЛАЕВА сăн ӳкерчĕкĕ.**